# Республика кунĕ ячĕпе саламлатпăр!

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă




"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)


120/26526/ № | Ытлари кун, 2014, çĕртме (июнь), 24 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


## Çыхăнусем вăй илчĕр

***Çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра РФ субъекчĕсен пуçлăхĕсен Раççей Ют çĕр-шывсен ĕçĕсен министерстви çумĕнчи канашĕн XXIII ларăвне хутшăнна. Унта пăхса тухнă тĕп ыйту – НППП анлăшĕнчи интеграци процесĕсене аталантарас енĕпе регионсем килĕштерсе ĕçлессин пĕлтерĕшĕ.***

Ларура тухса калаçнă май Раççей ют çĕр-шывсен ĕçĕсен министрĕ Сергей Лавров НППП туса хуни çĕр-шывсемпе халăхсен кÿршĕллĕ ырă хутшăнăвĕсене çирĕплетме пулăшнине палăртнă. Раççей регионĕсем Пĕрлĕхри çĕр-шывсемпе çыхăну тытас тĕлĕшпе пуян опыт пухнă. Беларуçпа тата Казахстанпа уйрăмах лайăх çыхăнусем йĕркеленнĕ. Шел те, паллă пулăмсене кура Украинăпа çыхăну тытасси татăлнă. Сергей Лавров каланă тăрăх – чикĕ леш енче пурăнакан йăхташăмăрсем Раççей гражданлăхне илессине ансатлатассипе çыхăннă программăсем хăйсен уссине кăтартнă. Тĕслĕхрен, Украинăра пурăнакан, РФ гражданлăхне илес кăмăллă çынсен шучĕ виçĕ хут ÿснĕ.

Михаил Игнатьев та сăмах илнĕ. Вăл Чăваш Енре НППП йышĕнчи çĕр-шывсемпе экономика çыхăнăвне çирĕплетес тĕлĕшпе тимлĕ ĕçленине палăртнă. 2013 çулта Пĕрлĕхри çĕр-шывсемпе çыхăннă тулашри суту-илÿ çаврăнăшĕ 42% пысăкланнă, республикăн тулашри суту-илÿ çаврăнăшĕн чĕрĕкĕпе танлашнă /АПШн 94,7 млн долларĕ чухлĕ/. Кăçалхи кăрлач-пуш уйăхĕсенче Пĕрлĕхри çĕр-шывсемпе çыхăннă тулашри суту-илÿ çаврăнăшĕ 32% ÿснĕ. Анчах çак кăтарту чакас хăрушлăх пур, мĕншĕн тесен НПППри çĕр-шывсемпе çыхăннă тавар çаврăнăшĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 67,6% шăпах Украина тÿпи.

Беларуç Республикипе те лайăх çыхăну йĕркеленĕ. Тулашри суту-илÿ çаврăнăшĕ пĕлтĕр 1,2 хут пысăкланнă. Суту-илÿпе экономика тата культура çыхăнăвĕсене анлăлатас тĕлĕшпе ĕç ушкăнĕ туса хунă. Беларуçпа Чăваш Ен Таможня пĕрлĕхĕн территорине усă курнă техника илсе килесси ÿснине кура ятарлă хÿтлĕх тĕпчевĕ ирттермешкĕн Еврази экономика комиссине пĕрле чĕнсе каланине хатĕрленĕ. Ыйтăвĕ чăннипех çивĕч. Пĕлтĕр кăна Раççей рынокĕнчи усă курнă техника импорчĕ 12% хăпарнă. Çавна май Чăваш Енпе Беларуç ют çĕр-шывсен транспорт хатĕрĕсене обязательнăй йĕркепе сертификацилемелли мерăсене çирĕплетме сĕннĕ.

Михаил Игнатьев ларăван пĕтĕмлетÿ документне Суту-илÿ тата Экономика аталанăвĕн министерстви валли сĕнÿсем кĕртмелли çинчен каланă. Чăваш Республикин Таможня пĕрлĕхĕн территорине усă курнă ют техникăна илсе кĕртес тĕлĕшпе чарусем палăртмалли пуçарăвне ырлама сĕннĕ. Сергей Лавров Чăваш Ен Пуçлăхĕнчен ку ыйтупа уйрăм çыру хатĕрлеме ыйтнă.

Ларура çавăн пекех интеграци процесĕсем вăй илесси çак ĕçе обществăна, граждансене явăçтарнинчен килнине палăртнă. Гуманитари, культура аспекчĕсем НППП анлăшĕнчи халăхсем çывăхланассине çирĕплетеççĕ. Çавна май патшалăхсем экономика енĕпе çывăхланни кăна мар, общество пурнăçĕн ытти енĕпе, культура тĕлĕшпе çыхăну тытни те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Тĕслĕхрен, Азербайджанра, Беларуçра, Казахстанра, Кăркăсстанра, Таджикистанра, Туркменистанра, Узбекистанра, Украинăра йышĕпе пысăк чăваш диаспорисене йĕркеленĕ. Вĕрентÿре икĕ еншĕн те усăллă ĕçтешлĕх вăй илнĕ: Чăваш Енре аслă шкулсем Украинăри, Беларуçри, Казахстанри университетсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлеме 10 ытла килĕшÿ тунă. Çавна май гуманитари сферинчи пĕрлехи право уйĕ интеграци процесĕсене малалла аталантармалли çирĕп никĕс пулма пултарать.

Ларура çавăн пекех йăхташăмăрсем Раççее куçса килес ыйтусене ансатлатас ыйтăва тишкернĕ. Патшалăх программипе килĕшÿллĕн Раççее 195 пин çын ытла куçнă, вĕсен çемйисенче 2 пин ытла ача çуралнă. Куçса килнисен 40% ытла – аслă пĕлÿллĕ, 75% – ĕçлеме пултаракан çулсенче, 20% – çул çитменнисем, 5% – пенсионерсем. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан Украинăран куçнисен шучĕ 5 хут ÿснĕ.

■ **К.ЯКОВЛЕВ**

## Китайпа алла-аллăн



cap.ru сайчĕн сăн ÿкерчĕкĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Самарта федерацин Атăлçи округĕнчи тата Китай Халăх Республикинчи Янцзы шывĕн Тури тата Вăтам юхăмĕнчи регионсен ертÿçисен «çавра сĕтелĕн» виççĕмĕш ларăвне хутшăннă.***

Ларăва Михаил Бабич полпред тата КНР Патшалăх Канашĕн членĕ Ян Цзечи ертсе пынă. Унта хутшăнма Атăл тăрăхне Китайăн 100 ытла çынран тăракан сумлă делегацийĕ килнĕ.

Чăваш Енĕн инвестици майĕсен презентацийĕ иртнĕ. Михаил Игнатьев маларах ĕçлĕ тĕл пулусем йĕркеленине аса илтернĕ, вĕсенче ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви, Аталану корпорацийĕ тата Китайри Сычуань Ксилин, Транстек Инжиниринг Корпорейшен компанисем инфратытăм тата ял хуçалăх проекчĕсене пурнăçлас кăмăлли çинчен калакан килĕшÿсене алă пуснă.

Республика Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх – ĕçтешлĕхĕн малашлăхлă çул-йĕрĕсенчен пĕри – ял хуçалăх продукцийĕ туса илесси, ăна тирпейлесе сутасси. Çакăн валли Канаш тăрăхĕнче питĕ лайăх логистика районĕ пур. «Паян эпир 250 га ытла йышăнакан ирĕклĕ çĕр лаптăкĕ пама пултаратпăр, унта тирпейлекен комплекссем, фермăсем вырнаçтармалли инфратытăм пур. Çавăн пекех ял хуçалăх культурисем çитĕнтерме 3-5 пин га çĕрпе тивĕçтерме май пур», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Чăваш Республики тата Сычуань провинцийĕ, çавăн пекех федераци пĕлтерĕшлĕ Чунцин хули суту-илÿпе экономика тата гуманитари сферисенче тачă çыхăну тытасси çинчен калакан икĕ енлĕ килĕшÿсене алă пуснă.

Çавра сĕтел хыççăн журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Михаил Игнатьев алă пуснă килĕшÿсем çывăх вăхăтрах пĕрлехи инвестици проекчĕсене пурнăçлассине вăй пама, вĕрентÿ, çамрăксен политики, культура, туризм сферисенчи ĕçтешлĕхе анлăлатма пулăшассине палăртнă.

■ **Н.АНДРЕЕВ**

## ЧНК: Устав çĕнелчĕ, ĕç-хĕл карти аслăланчĕ

***Республика кунне уявлама тĕрлĕ регионтан йăхташсем килсе çитрĕç. Çак пулăмпа усă курса Чăваш наци конгресĕ Мăн Канаш ларăвне ирттерчĕ. Тĕпрен илсен унăн кун йĕркинче регионсен хушшинчи общество асăннă организацийĕн Уставне сÿтсе явас ыйту пулчĕ.***

Ларăва ЧНК Президенчĕ Николай Угаслов уçрĕ. Малтанах ĕç органĕсене – президиума, секретариата, редакци тата шутлав комиссийĕсене – çирĕплетрĕç.

– Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă Пухăвĕнче организацин Уставне çĕнетмелли çинчен ыйту хускатнăччĕ. Унти хăш-пĕр пункт паянхи саккунсемпе килĕшсе тăманни паллăччĕ. Ку ĕçе вăраха тăсмалла маррине ăнланатпăр: саккунпа килĕшсе тăман документлă пĕрлешĕвĕн шăпи иккĕленÿллĕ. Кĕске хушăра ЧНК Президиумĕпе ятарлă комисси Уставăн çĕнĕ редакцине хатĕрлерĕç. Ку енĕпе комисси членĕсене Николай Лукианова тата Александр Павлова уйрăммăн тав тăватăп, – терĕ Конгресс ертÿçи Николай Угаслов.

Проекта сÿтсе явма тытăниччен Устава хатĕрлекенсене сăмах пачĕç.

– 2013 çулхи юпа уйăхĕнче иртнĕ Аслă Пуху хыççăн пуçăнтăмăр пысăк ĕçе. Малтанхи Уставăн кăшкарĕ çеç тăрса юлчĕ темелле: сĕнÿсене шута илсе /тиркекен те, мухтакан та чылай пулни Конгресс ĕç-хĕлĕ çынсемшĕн икĕ айкки те тăвайкки евĕр пулманнине çирĕплетрĕ/ нумай юсарăмăр-хушрăмăр. Документăн проектне халăх патне пичетпе электрон мелĕпе çитертĕмĕр, – Устава çĕнетесси пĕр-икĕ кунри ĕç маррине çирĕплетрĕç Николай Лукиановăн сăмахĕсем.

Мăн Канаш ларăвне килсе çитнĕ йăхташсенчен чылайăшĕ, шел, сÿтсе явмалли проекта пухăва пырсан тин алла тытрĕ. Кашни пайпа, пунктпа тĕплĕн паллашаймарĕ те-и? Апла пулин те залра ларакансен хушшинче сĕнÿ паракан чылай пулчĕ. Акă, калăпăр, Уставăн тĕп тĕллевĕсене палăртакан 2-мĕш пайăн 2.1. пунктĕнче çапла палăртни пур: «... нацисен хушшинчи çураçăва тивĕçтерес, Раççей Федерацине демократи, цивилизаци тата федераци патшалăхĕн шайĕнче упраса аталантарас ĕç-хĕл».

– Чăваш Республикине упраса хăварасси çинчен те каласа хăвармаллах кунта, – сĕнчĕ Константин Яковлев.

Пĕтĕмĕшле положенисем, Конгресс тытăмĕ, ăна йĕркелесси çинчен калакан пайсенче те Уставăн çирĕплетнĕ вариантĕнче хушăмсем, уçăмлатнисем пулĕç ахăртнех.

Мăн Канашăн ларăвĕнче Чăваш наци конгресĕн çĕнĕ йышне çирĕплетес ыйтупа та хĕрÿ калаçрĕç. Ĕç-хĕле тухăçлăрах йĕркелес тĕллевпе Президиумăн йышне Чăваш Республикин ертÿлĕхĕнчи çынсене те – вĕренÿ министрне Владимир Иванова, культура министрне Вадим Ефимова, информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрне Валентина Андреевăна, экономика аталанăвĕн министрне Владимир Аврелькина – кĕртме йышăнчĕç. Вĕсем регионсен хушшинчи общество организацийĕн ĕç-хĕлне витĕм кÿрес пирки хăшĕ-пĕри иккĕленчĕ пулин те Конгресс хускатнă çивĕч ыйтусене пурнăçа кĕртме чиновниксем те хастар хутшăнасса шанаççĕ ЧНК активисчĕсем.

* * *

Каç кÿлĕм Аслă Пуху ĕçлерĕ. Унта ЧР культура тата вĕренÿ министрĕсем Вадим Ефимовпа Владимир Иванов, ЧР Патшалах Канашĕн депутачĕсем, чăвашлăхшăн çунакан хастарсем хутшăнчĕç.

Съездра сÿтсе явмашкăн тăратнă тĕп ыйтусенчен пĕри – Мăн Канашра пăхса тухнă Устав проектне йышăнасси. Ăна улăштарни пурнăç ылмашăнса пынипе çыхăннă. Конгресăн саманапа тан утмалла. Унсăр пуçне РФ политика тата право тытăмĕ питĕ хăвăрт улшăнса çĕнелет. Конгресс çĕр-шыв тата республика саккунĕсемпе килĕшÿллĕн, тĕнче правине шута илсе ĕçлесе пырать. Чăваш халăхĕ хăй те улшăнчĕ. Ытти халăх пекех вăл тĕрлĕ енлĕ аталану çулйĕрĕ шырать.

Делегатсен нумай шухăшне, сĕнĕвне тĕпе хурса Чăваш наци конгресĕн çĕнетнĕ Уставне пĕр саслă пулса йышăнчĕç.

Тĕплĕнрех – çитес номерте.

■ **И.ИВАНОВА, А.ИЗМАН.**



Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ

## Уяв ячĕпе!

**Хисеплĕ ентешĕмсем!**

**Сире Республика кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

Чăваш Ен – тĕлĕнмелле илемлĕ тăрăх, кунта ĕçчен, тарават та ырă кăмăллă çынсем пурăнаççĕ.

Эпир хамăрăн халăхăн хăйне евĕрлĕ культурине, авалхи йăли-йĕркине тирпейлĕн упраса ăруран ăрăва паратпăр. Туслăх, пĕр-пĕрне ăнланни, ыттисемпе тимлĕ пулни, тăван çĕре юратни, аслисене хисеплени – çакă пире хамăрăн нумай нациллĕ республикăри тăнăçлăхпа çураçăва упрама пулăшать.

Чăваш Ен çуллен илемленсе, пуянланса пырать, кунти пурнăç та хăтлăланать. Çынсем, кашни çемье хăйсене социаллă пурнăç енĕпе лайăхрах туясси вăй илет. Ку – пирĕн пĕрлехи ĕç кăтартăвĕ.

Экономика ăнăçлă аталанать. Юлашки икĕ çулта строительство керамикин çулталăкра 60 млн штук кирпĕч кăларакан пысăк «KETRA» завод, «Етĕрнесĕт» АУОн тата нимĕçсен Develey паллă компанийĕн ял хуçалăх продукцине тирпейлекен завочĕсем хута кайнă, «Трактор завочĕсем» концернра çĕнĕ йышши «АГРОМАШ 4000» комбайнсен производствине пуçарнă.

Хула-районсенче пурăнмалли çĕнĕ кварталсем çĕкленеççĕ. 2013 çулта пурăнмалли 837 пин тăваткал метр ытла çурт-йĕр хута янă, 10 пин ытла çемье хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарнă.

Юлашки икĕ çулта республикăра халăх йышĕ ÿснĕ, нумай ачаллă çемьесен шучĕ 10% пысăкланнă. Ачасен шкулчченхи 23 учрежденине тунă тата реконструкциленĕ. 2014 çулта тата çĕнĕ 14 ача сачĕ уçăлмалла, вĕсен строительстви валли 1 млрд тенкĕ ытла уйăрнă.

Пĕлтĕр Чăваш Ен Раççейĕн чи лайăх спорт регионĕн ятне тивĕçсе Наци премине илчĕ. Пирĕн патра халăх йышлă хутшăнакан физкультурăпа спорт мероприятийĕсем час-часах ирттеççĕ, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлатпăр, аталаннă спорт инфратытăмне йĕркеленĕ, çавна май республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын физкультурăпа тата спортпа туслă. Кăçал Чăваш Ене спортăн тĕрлĕ енĕпе пĕтĕм Раççейри 18 ăмăртăва ирттерме шаннă. 2015 çулта Шупашкарта çăмăл атлетсен командăсен Европа чемпионачĕ иртмелле, 2016 тата 2018 çулсенче – хăвăрт утакансен Тĕнче кубокĕ.

Пирĕн тĕллев – Чăваш Енре пурăнакан кашни иккĕмĕш çын сывă пурнăç йĕркине тытса пытăр тесе условисем йĕркелесси. Çак тĕллевпе уйăхсерен Сывлăх кунне ирттерме йышăннă – çав кунсенче мĕн пур спорт объекчĕ çынсене тÿлевсĕр йышăнать. Чăваш Енĕн тĕп хулинче юлашки çулсенче шкул стадионĕсен футбол уйĕсене çĕнетнĕ, çуртсен картишĕсенче тренажерсемпе тивĕçтернĕ спорт комплексĕсем вырнаçтарнă, кăмăл пуррисем вĕсемпе пурте усă курма пултараççĕ. 2010-2013 çулсенче кăна Шупашкарта пысăк темиçе спорт объектне хута янă, çав шутра – Чăваш патшалăх педагогика институчĕ çумĕнчи бассейн, ачасемпе çамрăксен 9-мĕш спорт шкулĕн шывра ишмелли бассейнĕ, 2013 çулхи раштавра вара «Спартак» физкультурăпа сывлăх комплексĕн алăкĕсем уçăлчĕç. Шупашкарта спортăн пысăк икĕ объектне – Олимп хатĕрлевĕн маунтинбайк центрне тата Пăр кермене – хута яни çитĕннисемпе ачасене спортăн интереслĕ çĕнĕ енĕсемпе туслашма май парĕ.

Шупашкар хулине никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленесси, çак уявсене ирттересси малашнехи улшăнусемшĕн хушма тĕрев пулĕç. Анлă проектсене пурнăçланă май Чăваш Ен тата та илĕртÿллĕрех регион пуласси куç кĕрет.

Социаллă пурнăçпа экономикăри тата политикăри тăнăçлăх, нацисен хушшинчи çураçу, общество хăрушсăрлăхне, кашни çын прависемпе ирĕкĕсене тивĕçтерни ыранхи куна çирĕппĕн тата шанчăкпа пăхма май параççĕ. Ваттисем «иртни – асра, пуласси – ăсра» тенĕ. Пирĕн халăх нумай ĕмĕре тăсăлакан историйĕнче тума пултарнинчен пĕтĕм лайăххине упраса тата аталантарса пырса, асаттесен халалĕпе йăлисене асра тытса, паянхи çĕнĕ технологисене ĕçе кĕртсе эпир малалла çирĕппĕн куçăпăр.

Чăваш Енре пурăнакансене пурне те çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, телей, ырлăх, хамăрăн çĕр-шывăмăр аталанăвĕшĕн пурнăçлакан пархатарлă ĕçре ăнăçу сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ** **М.ИГНАТЬЕВ.**

## Тепĕр çул Шупашкарта кĕтетпĕр!

***Çак сăмахсемпе вĕçленнĕ Германири Брауншвейг хулинче çăмăл атлетика енĕпе иртнĕ командăсен Европа чемпионачĕ. Ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ команди пухмача 25 медальпе пуянлатса иккĕмĕш вырăн йышăннă.***



Палăртма кăмăллă: чемпионатра Чăваш Ен чысне шăчăпа сикекен Анжелика Сидорова хÿтĕленĕ. Телее, ăна ăннă – хăйĕн кăтартăвне çĕнетсе пике «ылтăн» çĕнсе илнĕ. Аса илтеретпĕр: командăсен чемпионатне 2009 çултанпа йĕркелеççĕ, унта Европăри чи вăйлă 12 команда хутшăнать. Тепĕр çул сумлă ăмăртăва Шупашкар йышăнĕ. Çавна май Германие çăмăл атлетсен Пĕтĕм Раççейри федерацийĕн тĕп секретарĕ Михаил Бутов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов кайнă. Пирĕн ентешсем унта пулас ăмăртăвăн тĕп хулипе, республикăн спортри çитĕнĕвĕсемпе паллаштарнă. Чемпионат вĕçленнĕ кун Брауншвейг хули Шупашкара Европа атлечĕсен ассоциацийĕн ялавне панă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, çĕрле 12 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 747 мм, сывлăшри нÿрĕк 42 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 39 минут.**

# Çтерлĕк ытларах ĕрчĕ



Нумаях пулмасть Куйбышев шыв управне, Шупашкар ГЭСĕн хыçне, 14 пин çтерлĕк лăкки янă. ЧР чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вăл пурăнакан вырăнсене сыхлакан, тĕрĕслекен тата унпа усă курассине йĕркелекен патшалăх службин пай ертÿçи Владимир Шабалкин вĕсем çитĕнсе промышленноç меслечĕпе тата харпăр хăй валли пулă тытакансене савăнтарасса шанать. Вăл кăмăса ăшăхлăха чăмтарнине çирĕплетрĕ.

Гидроузелăн Сĕнтĕрвăрри еннелле 4 çухрăма тăсăлакан хыçĕнче çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те пулă тытма юрамасть. Апла пулин те чылайăшĕ йĕркене пăхăнмасть. Вĕсем тĕлĕшпе кăçал çĕр-çĕр административлă ĕç пуçарнă. «Хĕлле Çĕнĕ Шупашкар пулăçисен общество организацийĕ çав тăсăмра «Пулăç пулăçа инçетренех асăрхать» конкурса хутшăннисене пулă тыттарса саккуна пăсрĕ», – пĕлтерчĕ РФ Пулă агентствин Вăтам Атăл территори управленийĕн республикăри пайĕн ертÿçи Валерий Григорьев.

Лăкă туянса Чăваш Ене кÿрекенни – Тутарстанри «Кама» юхан шыв порчĕ» АО. Унăн пăрахучĕсем темиçе уйăх каялла чĕрĕлĕхшĕн сиенлĕ шĕвекпе управа вараласа пысăк тăкак кÿнĕ. Пулă институчĕн тĕпчевçисем темиçе кăмăс çумне систерекен ятарлă хатĕр вырнаçтарнă. Вăл пулăсем ăçта куçнине пĕлсе тăма пулăшĕ.

■ С.СЕРЕГИН

Госслужба занятости Чувашии

# Пысăк тухăçлă ĕçе вырнаçма професси хатĕрленĕвĕ çÿллĕ шайра пулмалла

***Рынокри лару-тăрупа паянхи кăларăмра Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертÿçи Сергей Петрович ДИМИТРИЕВ паллаштарать.***

**– Сергей Петрович, ĕç рынокĕнчи лару-тăру чылай чухне экономика аталанăвĕн шайĕпе çыхăннине час-часах палăртатпăр. Экономика тытăмĕн хăш пулăмĕ ăна ытларах витĕм кÿнипе паллаштараймăр-ши?**

– Республика экономикине сăнлас тĕллевпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Регионсем – вĕçĕмсĕр килĕштерсе ĕçлесси» Шупашкарти VII экономика форумĕн 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнчи пленарлă ларăвĕнче тухса каланă сăмахсене илсе кăтартатăп. «Республика тăнăç регион пулнипе палăрса тăрать. Çĕнĕ предприятисем уçмашкăн пирĕн май çителĕклех. Тĕслĕхрен, çак кунсенче «Акконда» кондитер изделийĕсен çĕнĕ техника линийĕ, çавăн пекех «ЭКРА», «Бреслер» НППсенче, «ЭкоКлинкерта», «Хĕвелте» çĕнĕ производствăсем хута яма палăртнă», – терĕ вăл.

Çакна Чăваш Ен кăтартăвĕсем аван çирĕплетеççĕ: социаллă пурнăçпа экономикăри лару-тăру ăнăçлă аталаннă май предприяти-организацире çынсене ĕçпе тивĕçтерессин тăнăçлăхĕ кал-кал пырать. 2014 çулхи кăрлач-çу уйăхĕсенче промышленноç производствин ÿсĕмĕ иртнĕ çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан 104,7 процента çитнĕ. Транспорт хатĕрĕсемпе оборудовани /141,7 процент/, целлюлозăпа хут, издательствăпа полиграфи /113,8/, тимĕр шутланман минерал продуктсем хатĕрлес /112,2/, йывăç тата унран издели тăвас /110,4/, электрооборудовани, электрон тата оптика оборудовани кăларас /108,8/ ĕç-хĕлте çитĕнÿсем тата курăмлăрах. Республикăри производство кăтартăвĕсем ÿссе пыни техника тата технологи тĕлĕшĕнчен çĕнĕлĕхсем кĕртнипе, çавăн пекех Чăваш Республикин 2020 çулчченхи тапхăрти социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн Стратегийĕнче палăртнă инвестицин приоритетлă проекчĕсене пурнăçа кĕртсе пынипе çыхăннă. Ĕç тухăçне пысăклатас тата шалăва хăпартас тĕллевлĕ çак мероприятисем эффективлă мар вырăнсене тата пĕчĕк квалификациллĕ ĕç вăйĕ ыйтассине чакарма май панипе пĕрлех профессин пысăк компетентлă специалисчĕсем валли çул уçма пулăшаççĕ. Ĕçлев служби органĕсен ваканси банкĕнче паянхи кун тĕлне рабочисем валли 19 пин пушă вырăн пуррине пĕлтернĕ, вĕсенчен 15 процентĕ ытла пысăк тухăçлисен шутне кĕрет. Республикăри чылай предприятие халĕ квалификациллĕ рабочи кадрĕсем кирлĕ. Ĕç паракансем инженерсене, строительсене, информаци технологийĕн сферин специалисчĕсене ытларах ыйтаççĕ.

Аса илтеретĕп, пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсене Росстат çирĕплетнĕ меслетлĕхпе статистика органĕсем палăртаççĕ. Ăна шутламашкăн экономикăн тишкерекен секторĕ хăшĕ пулнине кура икĕ тĕп критерипе усă кураççĕ: производство тытăмĕн чылай секторĕ – çав шутра производство ĕçĕ-хĕлĕн çÿлерех асăннă тĕсĕсем – тĕлĕшпе ĕç тухăçлăхне, пулăшу енĕпе /медицина, вĕренÿ, финанс, коммуналлă пулăшу тата ытти/ ĕç укçин шайне тĕпе хураççĕ.

Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – республикăри организацисенче 2013 çулта пысăк ĕç тухăçĕллĕ 145,7 пин вырăн пулнă. Пирĕн хутлăхра ĕç тухăçлăхне ÿстерес, пысăк ĕç тухăçĕллĕ вырăнсем йĕркелес тата вĕсене модернизацилес енĕпе пурнăçламалли мероприятисен планне туса хатĕрленĕ. Ăна ĕçе кĕртес тĕллевпе Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби центрсене ЧР Экономика министерстви сĕннипе хатĕрленĕ пысăк тухăçлă вырăн пур организацисен суйласа илнĕ перечене ярса панă. Хальхи вăхăтра ĕçлев центрĕсем çакнашкал вырăн пур предприятисемпе килĕштерсе ĕçлессине йĕркеленĕ. Чăваш Республикинчи организацисене ĕçсĕр шутланакансен йышĕнчи граждансенчен хăйсене кирлĕ специалиста вĕрентмешкĕн сĕнсе 50 ытла çыру çитернĕ.

Хальхи вăхăтра Комсомольски районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçсĕр гражданина «Кооператор» ОООна вырнаçтарас тĕллевпе котельнăй операторĕн специальноçне вĕренме янă, «Акконд» ООО /Канаш хули/ валли – пекаре, ВНХМ филиалне /Çĕнĕ Шупашкар хули/ электрогазосварщика йышăнмашкăн ĕçсĕрсене ăсталăх илмешкĕн вĕрентме палăртнă.

Çĕмĕрле хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçсĕр граждансене «Çĕмĕрлери ятарлă автомобильсен завочĕ» АУОна вырнаçтарас тĕллевпе вĕсене çулталăкĕпех профессие алла илтересшĕн. Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр троллейбус управленийĕпе тунă Килĕшÿ тăрăх 7 водителе специальноç илме пулăшмалла. Хальхи вăхăтра вĕсем транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕнче пĕлÿ илеççĕ.

Асăннă мероприятие ĕçсĕр граждансем валли професси тата профессин хушма вĕренĕвне йĕркелеме уйăракан укçатенкĕ шучĕпе финанслаççĕ. Ĕçпе тивĕçтерекенсем ыйтакан техника заданийĕпе килĕшÿллĕн пĕлÿ учрежденийĕсене конкурс тăрăх суйласа илеççĕ.

**– Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби республикăри тухăçлă ĕç вырăнĕллĕ ваканси сĕнекен пысăк предприяти-организацирен хăшĕнпе çыхăну тытать тата ĕç паракансем унта вырнаçас текенсенчен çирĕп ыйтаççĕ-и?**

– Чи малтанах çакна палăртатăп: çыхăну тытмашкăн ĕç паракансен пысăк йышне хутшăнтарасси тата предприятисен кадр службисемпе партнер хутшăнăвĕсене çĕнĕлле йĕркелесси ĕçлев органĕсен приоритетлă тĕллевĕ пулса тăрать. Хăйсене кирлĕ специалистсене суйламашкăн ĕçлев службинчен пулăшу ыйтакансен йышĕ 2013 çулта ĕç паракансен пĕтĕм хисепĕн 14 проценчĕпе танлашнă /Раççей Федерацийĕнче – 6,1/.

Эпир чылай предприятиорганизаципе, пĕчĕк бизнес представителĕсемпе тата ыттисемпе çыхăну тытатпăр. Паллах, Чăваш Республикин экономикине аталантаракан тата социаллă тăнăçлăх кÿрекен пысăк организацисем халăха ĕçпе тивĕçтермелли мероприятисене пурнăçа кĕртес енĕпе яваплă та шанчăклă социаллă партнер шутланаççĕ. Вĕсен шутĕнче – «Химпром» /управляющи директор – Е.Колесников/, «Акконд» /генеральнăй директор – В.Иванов/, «В.И.Чапаев ячĕллĕ ЧПО» /генеральнăй директор – М.Резников/, «Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ» /генеральнăй директор – Э.Балыбердина/, «Шупашкарти агрегат завочĕ» /исполнительнăй директор – К.Марков/ АУОсем, «Промтрактор-Промлит» /исполнительнăй директор – Ю.Костромичев/, «НПП «ЭКРА» /генеральнăй директор – О.Саевич/ ООО-сем тата ыттисем. Вĕсем служба органĕсем янипе пынă çынсене пысăк тухăçлă çĕре вырнаçмашкăн тăтăшах пулăшаççĕ. Çакна палăртмалла: ĕç паракансемпе пĕрле вакансисем пирки вăхăтра хыпарлассине кал-кал йĕркелеме пултартăмăр. Паянхи кун тĕлне ĕç кадрĕсен тата специалистсен куçăмĕ пирки 1860 организаци /кашнинче 35 çын ытла тăрăшать/ информацие уйăхсерен çитерет.

2014 çулхи кăрлач-çу уйăхĕсенче халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби органĕсем пулăшнипе 15 пин ытла çынна вырнаçтарнă. Ĕç паракансен вакансийĕ тăрăх 76-шне – «В.И.Чапаев ячĕллĕ ЧПО» АУОна, 60-шне – «Химпром» АУОна, 42-шне – «Промтрактор-Промлит» ОООна, 40-шне – «Акконд» АУОна, 23-шне – «Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ» АУОна, 23-шне «Шупашкарти агрегат завочĕ» АУОна илнĕ.

Граждансене тивĕçлĕ шалуллă ĕçе кĕске хушăрах тупма пулăшас тĕллевпе Чăваш Ен халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби Чăваш Республикин 2020 çулчченхи тапхăрти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн Стратегине кĕртнĕ инвестици проекчĕсене ĕçе кĕртнипе уçнă çĕнĕ ĕç вырăнĕсен хисепĕ пирки ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви хатĕрленĕ информаципе пуçаруллă усă курать. Çав проектсенчен хăшĕ-пĕрне кăна асăнатăп: хĕвел модулĕсен производствин предприятине /«Хĕвел» ООО/, лизин тата унпа çыхăннă выльăх апатне кăларакан производствăна /«ЧăвашАгроБио» АХО/ йĕркелени, производство корпусĕсене реконструкцилени тата çĕнетсе улăштарни /«Акашевская» чăх-чĕп фабрики» ООО/, «Чăваш Ен этносĕ» турист-рекреаци кластерĕ туса хуни, Шупашкар хулинчи «Олимпийский» стадионта пăр кермен çĕклени тата ытти те. Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – 2014 çулхи пĕрремĕш кварталта хушма çĕнĕ ĕç вырăнĕсем 1000 ытла хатĕрленĕ.

Ĕç шыракансенчен професси хатĕрленĕвĕ тата компетенцийĕ тĕлĕшпе чăнах та çирĕп ыйтаççĕ. Ман шухăшăмпа – çакă хальхи экономикăна ÿсĕмлĕ аталантармалли ырă туртăм пулса тăрать. Производствăна компьютерпа йĕркелесе тăмалли çĕнĕ технологисем пурнăça кĕреççĕ, хальхи йышши информаци технологийĕсемпе усă курса тивĕçтерекен пулăшу йĕркелеççĕ, ял хуçалăхĕн пысăк тухăçлă техники хăрасах темиçе ĕç тума пултарать – вăрлăх акать, çĕр хатĕрлет, тыр-пула пухса кĕртет тата ытти те. Самана ыйтнине тивĕçтермешкĕн тата карьера тĕлĕшĕнчен çĕкленес тесен професси пĕлĕвне пуянлатса тăмалла, компетенци шайне ÿстермелле, çĕнетсе пымалла, тивĕçе пурнăçлакан, йĕркене пăхăнакан специалист пулмалла.

**– Чăн та, хальхи çамрăксем харăсах темиçе профессие вĕренмешкĕн талпăнаççĕ. Ĕç паракансен хушшинче те хăйсен çыннисене фирмăрах вĕрентессине йĕркелекен пур. Сирĕн служба граждансене ĕç рынокĕнчи конкуренцире тупăшас пултарулăха ÿстерме пулăшаять-и?**

– Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби инвестици проекчĕсемпе килĕшÿллĕн производствăна модернизацилекен тата реструктуризацилекен предприятисене хăйсен кадрĕсене ăсталăха ÿстерес тĕллевпе професси вĕренĕвне маларах ямашкăн пулăшма пултарать. Организацире тăрăшакансемшĕн вĕренÿ – пĕлĕве пуянлатни, тупăшма пултарăслăха вăйлатни, ăсталăха туптани. Шăпах çакăн пек пахалăхлă çынсем кирлĕ ĕнтĕ çĕнетсе улăштарнă тата пысăк тухăçлă вырăнсенче вăй хумашкăн.

2014 çулта Чăваш Республикинчи модернизаци тата технологи аталанăвĕ енĕпе ĕçлекен канашăн ушкăнĕ сĕннĕ Шупашкарти предприятисенчи – «Промтрактор», «В.И.Чапаев ячĕллĕ ЧПО» АУОсем, «Промтрактор-Промлит», «Яхтинг» ООО-сем йышшисенчен – 300 ытла çынна профессие маларах вĕренме ямалла.

Вĕсем панă заявкăсем тăрăх – вĕренĕве çак професcисем тăрăх йĕркелеççĕ: рулон тата уйрăм материалсенчен тăрă витекен /кровельщик/, мост типлă крансен крановщикĕ, стропальщик, ГПМ юсакан тата техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан слесарь, газ оборудованийĕ эксплуатацилекен тата юсакан слесарь, техника кăмакисен кочегарĕ, компрессор установкисен машинисчĕ, электрогазосварщик тата ытти.



Тĕслĕхрен, «Промтрактор» АУО хальхи вăхăтра республикăшăн пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕсене – 3 тата 4 типлă комбайнсен, промышленноç бульдозерĕсен тата крансен – трубоукладчиксен, гусеницăллă экскаваторсен /фронтальнăй/ погрузчикĕсен производствине йĕркелессипе çыхăннисене – пурнăçлать. Рабочи профессийĕпе квалификаци шайĕпе йышăнакан вырăн ыйтнине çынсем тивĕçтерме пултарччăр тесе предприяти ертÿлĕхĕ Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрпа хăйсен специалисчĕсене маларах вĕрентмешкĕн килĕшсе татăлнă. 2014 çулта 112 рабочие кран машинисчĕн, бульдозер водителĕн, техника кăмакин кочегарĕн специальноçне – пĕтĕмпе 11 профессие вĕрентсе кăлармалла. 20 инженерпа техникăн квалификацине конструктор тата технологи программисем тăрăх ÿстермелле, çапла майпа вĕсене проектлама, производство процесне, ресурссене тăкакланине контрольлеме, туса кăларакан продукци пахалăхне тĕрĕслеме тата ăна вырăна çитерме хутшăнтармалла. Хальхи вăхăтра «Промтрактор» АУОн 35 ĕçченĕ вĕренÿре, вĕсенчен 9-шĕ – специалист.

«Яхтинг» фабрика ĕç тата ятарлă атă-пушмак рынокĕнче 10 çул ытла ăнăçулăхпа палăрса тăрать, уйăхсерен 50 пин мăшăр туса кăларать. Модельсен тĕсĕ 150-ран иртет. «Тирсăран завочĕн строительстви», «Халăх валли кулленхи тата треккинг пушмакĕ туса кăларассине йĕркелесси» инвестици проекчĕсене пурнăçлани пысăк тухăçлă вырăнсем йĕркелеме хистет, вĕсенче вара професси ыйтнине тивĕçтерекен специалистсен вăй хумалла.

Çынсен профессипе квалификаци шайне ĕç вырăнĕ ыйтнипе пĕр килтерес тĕллевпе предприяти ертÿлĕхĕ Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрпа профессие маларах вĕрентмешкĕн Килĕшÿ тунă. 2014 çулта 30-шне çĕвĕç тата ЭВиВМ операторĕ специальноçне хăнăхтарма палăртнă. Хальхи вăхăтра асăннă предприятире ĕçлекен 10 çĕвĕç «ЭВиВМ операторĕ» программăпа квалификацие Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин вĕрентÿпе методикăн «Аспект» центрĕнче ÿстернĕ. «Яхтинг» ООО-ра компьютер класĕ туса хунă, çавна май çынсем производствăран уйрăлмасăрах вĕренме пултарнă. Професcин хальхи компетенцийĕ вĕсене техникăн çĕнĕ шайĕллĕ операцисем пурнăçлама май парĕ.

Ĕçлев служби органĕсем кăçал професси вĕренĕвне 3 пин ытла гражданина, çав шутра – ĕçсĕрсене, ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ хĕрарăмсене, ĕçлес тĕллевлĕ пенсионерсене, граждансен ытти категорине яма пăхнă. Вĕсене республикăри ĕç рынокĕ ыйтакан профессипе тата специальноçпа пĕлÿ параççĕ.



● *Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби професси вĕренĕвне йĕркелекен пай пуçлăхĕ Татьяна Фомина «Промтрактор» АУОра ăсталăха ÿстерекенсен ушкăнĕнче.*

Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

## «Вăкăра тупса парăр!» тейиччен…

Юлашки çулсенче çынсем хăйсен тимсĕрлĕхне пула çухатнă, ăçта хунине манса кайнă япаласене полици ĕçченĕсене шыраттараççĕ. Айванла е суя шăнкăравсемпе ĕçлĕ çынсен кун йĕркине пăснине ăнланмаççĕ те çавнашкал çăмăлттайсем. Ан манăр: усăсăр шыравirttерес вырăнне полици ĕçченĕ хаклă вăхăта чăннипех инкек тÿсекене пулăшмашкăн яма пултарать-çке.

Граждансем выльăх е чăхчĕп çухалнă тесе час-часах пĕлтереççĕ. Вырăна çитсе тĕпчеме пуçлатăн та – пăру е сурăх кĕтÿрен таврăнманни е кăкарăçран вĕçерĕнсе кайни палăрать. Хуçисем вара вĕсене хăйсем тĕллĕн шырама шухăшламаççĕ те.

Пĕррехинче Вăтакас Кипеч ялĕнче пурăнакан пĕр хĕрарăм 72500 тенкĕ укçа çухални çинчен евитлерĕ. 14 çулти ывăлĕ вăрлама пултарни çинчен каларĕ. Вырăна çитсен нухрата никам та вăрламанни, вăл шифоньерта упранни паллă пулчĕ. Хуçи тĕплĕ пытарнă пурлăхне ăçта хунине манса кайнă иккен…

Çеçпĕл ялĕнче пурăнакан хĕрарăм хăйне почтальон пĕр эрне каялла килнĕ пенси укçине паманни, çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсем ĕç вăхăтĕнчех пÿлĕмре питĕрĕнсе эрех ĕçни çинчен пĕлтерчĕ. Ку факта та тĕрĕслеме тиврĕ. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче канмалли кунсем пулнăран почтальонсем официаллă йĕркепе каннă. Эрехпе айкашни – суя элек.

Маякран шăнкăравланăччĕ тата... Хуçалăхра слесарь станокĕ çухалнă имĕш. Пирĕн ĕçченсем вырăна пырса çитнĕ те «çухалнă» пурлăха ăпăр-тапăр купи айĕнчен тупса кăларнă.

«Вăрланă-и, вăрламан-и – пĕлместĕп, анчах вăкăра тупса парăр!» – çирĕппĕн калаçрĕ тепрехинче арçын. 4 кунран ку хуçан выльăхĕ килне ырă-сывах таврăннă.

«Суя шăнкăрав» ăнлав пуррине ан манăр, ентешсем. РФ КоАПĕн 19.13. статйипе килĕшÿллĕн пушар хуралне, полицие, васкавлă пулăшу службине, ятарлă ытти службăна суя евитлевшĕн административлă майпа явап тыттараççĕ, «суеçĕн» 1000 тенкĕрен пуçласа 1500 тенкĕ таран штраф тÿлеме тивет.

■ **И.НИКОЛАЕВА,**
**Канаш районĕн полици ĕçченĕ, следстви пайĕн пуçлăхĕн çумĕ**

*Акци хыççăн*

## Маттур чăвашсемшĕн хĕпĕртетĕп

Кăçал «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акцие пĕлтĕрхинчен нумайрах çын хутшăнни çинчен /3100 яхăн çын. – **Ред.**/ пĕлсен йăхташсемшĕн чăннипех хĕпĕртерĕм. Диктанта «пиллĕклĕх» çырнисен списокĕнче 70-тен иртнĕ Валерий Сапожников ятне курсан пушшех савăнтăм – Шупашкарти педколледж директорĕн должноçне йышăнаканскер намăс курасран шикленмен вĕт – хăйне шаннă эппин.

Валерий Васильевича кура диктант çырма колледжра вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те йышлăн ларнă. Çапла вăл – лавĕ лавçине кура...

«Хыпар» хаçатра вулакансем хăйсен тăрăхĕнчи пуçарулла çынсем, асăннă акцире чи лайăх паллă илме тивĕçнисем çинчен çырнине курас килет. Малашне çакнашкал мероприятисенче вырăнти правительство çыннисем йышлăрах пуласса шанас килет. Хальхинче Светлана Енилина министр ларнине куртăм та – хĕпĕртерĕм.

Шел, хам пирки хальлĕхе лайăххине пĕлтерейместĕп. Темĕн хăратрĕ çынпа пĕрле чăваш чĕлхин правилисене аса илме – ăнланмастăп. Пĕр сăмахпа, диктант çырма хутшăнманшăн питĕ ÿкĕнетĕп. Килес çул акци айккинче тăрса юлмăпах.

■ **Вячеслав САВАТЕР.**
Йĕпреç районĕ

*Ентешсем*

## Ял-йыша савăнтарчĕç

Пирĕн тăрăхри Уй Пилемĕч ялĕ пысăк мар: 6-7 теçетке килтен кăна тăрать вăл. Клуб хупăннă, лавкка та çук, вырăнти хуçалăх арканса пăчланнă.

Ял-йыш «Карабашский» совхозра вăй хунине халĕ те манмасть-ха. Акă Валентина Васильева ĕç ветеранĕ çамрăклах сурăх пăхма, ĕне фермине тăрмашма тытăннă. Унăн мăшăрĕ Петр Васильевич вара уй-хир бригадирĕнче тăрăшнă. Тивĕçлĕ канури ватăсем ура çĕре перĕнми чупса ĕçленĕ кунсене аса илеççĕ, халĕ ялта çамрăксене вăй хума вырăн çуккишĕн пăшăрханаççĕ. Тепĕр чухне совхозра пĕрле ĕçленĕ тантăшĕсемшĕн тунсăхлаççĕ.

Карапашри клуб ертÿçи Ольга Ефремова çÿлерех асăннă ватăсен кăмăлне пĕлнĕ тейĕн. Пенсири çынсене пухса пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленĕскер çак кунсенче вырăнти «артистсемпе» Уй Пилемĕче килсе çитрĕ. Шăп Валентина Егоровнăпа Петр Васильевич пурăнакан çурт умĕнче чарăнчĕ те... концерт лартма пикенчĕ ушкăн. Çапла, урамрах, сцена таврашĕсĕрех. Çакнашкал кĕтмен парне кÿчĕç Карапашсем 66 çула çитнĕ ятпа Валя аппана.

Римма Васильева ветеран сăвăсем янраттарнине чĕрене хускатмасăр итлеймĕн. Уаври хаваслă сасă Картлай вăрманĕ кăна мар, Чашлама шывĕ урлă каçса Кĕчкей таранах саланчĕ. Киле таврăнмалли вăхăт çитсен Уй Пилемĕче рейс автобусĕпе килнĕ «артистсене» кунти лавçăсем хăйсен лашисене кÿлсех ăсатма кăмăл турĕç. Çакнашкал чуна çĕклекен самантсем малашне те пуласса шанса çула тухрĕç вĕсем.

■ **Анатолий АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

*Çивĕччĕн*

## ППЭ хыççăн çуралнă шухăшсем

Юлашки вăхăтра тĕнче шайĕпе пурăнма тăрăшатпăр: ытти çĕр-шывран юлас мар тетпĕр. Кирлĕ е кирлĕ мар – ют çĕр-шывран йăлтах йышăнатпăр, çав шутра тĕрлĕ тытăмри йĕркене те.

...33 çул шкулта ĕçлетĕп. Çĕр-çĕр ачана вĕрентсе пурнăç çулĕ çине тăратнă. Хамăр та мăшăрпа вицĕ ача çуратса ÿстерсе вĕсене аслă пĕлÿ панă. Мĕн каласшăн-ши ку тетĕн-и, вулаканăм? Юлашки вунă çуллăхра ППЭ текен йĕрке пурнăça кĕчĕ. Çук, пирĕн çĕр-шывра шухăшласа кăларнă форма мар ку. Эпир ют çĕр-шывсенчен пурăнма вĕренетпĕр, вĕсем – пирĕнтен. Тĕслĕхрен, Норвеги çĕр-шывĕнче математика предметне Раççей программине тĕпе хурса вĕрентесшĕн.

Пирĕн вара 11 класс вĕренсе тухакан ачасем математикăпа тата вырăс чĕлхипе ятарлă йĕркепе пурте, ытти предмета суйласа илнипе ППЭ тытаççĕ. Ачасене çĕр-шыври кирек хăш вĕренÿ заведенине вĕренме кĕме май пулать тейĕ хăшĕ-пĕри. Мĕнле майпа?!

ППЭре оператор пулма тиврĕ. Кашни çулах пулнă-ха. Çапах та кăçал ППЭ тытасси ытти çулхинчен çирĕпрех пуласси çинчен малтанах каларĕç. Çапла килсе тухрĕ те.

ППЭ тыттаракан заведени алăкĕ умĕнче ачасенчен те çÿллĕ хуралçăсем тимĕр шыракан аппаратсемпе кĕтсе тăраççĕ. Террористсен ушкăнĕ килет тейĕн! Алăк умĕнчен иртрĕмĕр тейĕпĕр. Кашни аудиторире операторсемсĕр пуçне республикăран килнĕ инспекторсем лараççĕ. Кирлех пулсан ретĕн-ретĕн çÿреççĕ /видеокамерăсем пирки каламастăп та/. Пĕр утăм унталла, пĕр утăм кунталла тума, пĕр сăмах калама çук. Унта ан çаврăн, унран ан ыйт, сасăпа ан калаç. Туалета каяс килет – сана тин тытса килнĕ ристансем пек хуралçăсем илсе каяççĕ, илсе килеççĕ. /Юрать юнашар пĕрле кĕрсе лармаççĕ/. Маншăн, çулланнă çыншăн та, çак йĕркене чăтма йывăр. Ачасемшĕн вара? Пĕри кĕрсе ларнăларманах туалета чупма тытăнать, тепри чĕтреме тытăнать, хăйне ниепле те алла илеймест. Чăн та, виççĕмĕшĕсем хăйсене аванах тытаççĕ. Пур, паллах, нимрен те, нихçан та, ниçта та хăраман ачасем. Хăйсене аслисемпе тÿрккес тытаççĕ, тавлашма та хирĕç мар. Анчах çĕр-шыва ун пеккисем ытларах кирлĕ-шим?

Хăрушă преступлени тунă та тĕрмере лараççĕ тейĕн аякран сăнаса тăрсан. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ши пирĕн ачасем? ППЭне пăрахăçласси пирки сăмах та пуçарнăччĕ, анчах пирĕн пурнăça çирĕппĕнех вырнаçни куç кĕретех. Малашне ППЭри йĕрке тата та çирĕпрех пулĕ-ха. Усси пур тетĕр-и? «АиФ» хаçатра вуларăм: пĕр облаçра иртнĕ çул 22 ача ППЭ кăтартăвĕ япăх пулнăран хăйсем çине алă хунă. Пĕр облаçра çавăн чухлĕ! Раççейĕпе вара?.. /Эпĕ илтнĕ информаци тăрăх – 500 яхăн/. Халĕ ППЭсен вăхăчĕ вĕçленмен-ха, нумайăшне пĕтĕмлетмен. Татах шар курасси куç кĕрет. Сăлтавĕ – ППЭ.

Ман шухăшпа, ППЭ ачасен пĕлĕвне ÿстерме пулăшакан мел мар. Çакăнпа нумайăшĕ килĕшет, анчах ППЭне хирĕç чан çапма никам та шутламасть. Эпĕ ашшĕамăшне чĕнсе каласшăн. Эсир пĕр пулса хирĕç тăрсан лав вырăнĕнчен хускалатех. Пĕр-пĕрин çине шанма хăнăхни пĕтерет пире пурнăçра. Хамăра пырса çапсан тин хыпăнса ÿкетпĕр, чупкалама тытăнатпăр. Анчах чавса çывăх та çыртма çук ан пултăрччĕ.

■ **Валентина ЯКОВЛЕВА.**
Патăрьел районĕ,
Тури Туçа

